# Револютси искусствӑшӑн мӗн турӗ.

Искусствӑ мӗн вӑл?

Искусствӑ—вӑл ӑслӑлӑх.

Искусствӑ тӗслӗрен пур? Мусӑк калаççӗ—вӑл мӗн? Искусствӑ. Хутошник калама çук хитре картинкӑ сырат̆, ӑна мен тес? Вӑл та искусствӑ. Тата архиттектӑрсем ђаплӑ çуртсем тӑваççӗ. Хӑшӗ пилӗк хутлӑ, хӑшӗ вун хутлӑ, хӑшӗ çирӗм хутлӑ. Вӑл тата мӗн пулат̆? Вӑл та искусствӑх пулат̆.

Кирӗк мӗнле йапалана та хитре ђуна савмалла тума пӗлни искусствӑ пулат̆, ӑслӑлӑх пулат̆. Çӑпатана та темӗн пек хитре туса хурсан вӑл та искусствӑ пулат̆. Анђах çӑпата тунӑ ђух искусствӑ питех палӑрсах каймаст̆ пулмалла. Ђӑвашсем калаççӗ: çӑпата тӑвасси—вӑл ухмах ӗç теççӗ. Шутласан, ђӑмахах та, çӑпата туни çинђе ӑслӑхлӑх питех палӑрса каймаст̆. Çӑпата тӑвасси-вӑл маçтӑр ӗçӗ анђах.

Мусӑк калани те картинка çырни те çавах. Акӑ ивӗ кӗслеçӗ. Пери калама тин вӗренет-ха. Вӑл кӗслине те йунӑш йӗнерлӗ. Алли-ури те унӑн çавӑрӑнкалаймаст̆. Çавӑнпа вӑл кӗсле каланӑ ђух, искусствӑ палӑрсах каймаст̆: вӑл хӑлхана кӑна йӳхӗхтерет. Пӑхха теприне: мӗн тӑват̆ вӑл урхамах? Пӗр калама пуçласан ђуна çуатарат̆, итлесе тӑранаймӑн. Çакӑнта ӗнтӗ пӗтӗмпех искусствӑ: хитре сӑвӑсем, хитре сасӑсем йурлаççӗ, кулаççӗ, калаçаççӗ, йӗреççӗ ђуна çунтараççӗ.

Çавӑ сасӑсем хавасланса кайнӑ ђунтан ирӗле-ирӗле тухаççӗ. Вӗсем т пӗр çын ђунне кӗрсен, ӑна савӑнтараççӗ, каçӑхтарса йараççӗ. Мӗнтен килет ӗнтӗ çакӑн пек йапала?

Искусствӑран, ӑслӑлӑхран.

Халӗ революцтси вӑхӑтне илер.

Револютси пӗтӗм пурӑнӑçа çӗнетсе пырат̆. Çавӑн пирки искусствӑ та çӗнелме пуçларӗ. Ӑна пӗлес килсен ӗлӗкхипе халђхине танлаштарас пулат̆.

Ӗлӗкхи искусствӑ мӗнле-ђӗ.

Крексен: шурӑ тӑмран касса тунӑ статуйсем *) Ку кӗлеткесем çарамас. Крексем хӑйсем çарамас пекех çӳренӗ те, вӗсем çара етемрен вӑтанман. Вӑтанма мар, вӗсем хитре кӗлетмелле çынсене турӑран çуралнӑ пулӗ, тесе шухӑшланӑ. Çавӑнпа крексем шурӑ тӑмрам питӗ хитре çарамас кӗлеткесем тума пултарнӑ. Анђах çав кӗлеткесем темӗн пек хитре пулсан та, вӗсем етем ђунӗ сахал палӑрат̆.

Вӑтам ӗмӗрсенђе искусствӑ мӗнле пулнӑ?

Христус тӗпӗ сарӑлсан малтанах тӗрӗс ӗненме пӗлмен. Манахсем вӗрентме пуçланӑ: пирӗн пурӑнӑç сылӑхлӑ пурӑнӑç, пирӗн ўт-сылӑхлӑ ўт. Çавӑнпа сӑвана тухас пулсан çак ўте тивӗçпе нађарлантарас пулат̆. Йалан турра кӗл туса çылӑха натшалӑх кӗрсе ўкессине кӗтсе тӑрас пулат̆, тенӗ. Ђӑнах-та ун ђухнехи сӑнсене пӑхӑр-ха: мӗнле типсе кайнӑ вӗсем, тирпипе шӑмми анђах йулнӑ вӗсен, пӗр куçӗ кӑна ӗмӗтлеисе çунат̆, типӗ сӑнсене авалхи турӑшсенђе курма пулат̆.

Вӑтам ӗмӗрсем хиççӑн Грецине Рим пурӑнӑçӗ тепӗр хут çӗнелсе килет̆. Ку вӑхӑта „эпоха возрождения“, „эпоха гуманизма“, теççӗ. Ун ђухнехи искусствӑ ӑçталла парӑнат̆ тӑта?

Ун ђухнехи ђаплӑ хутошниксем акӑ çаксем: Рафаел, Микел-Анджело Леонардо-да Винчи. Вӗсем темӗн пек хитре картинӑсем çырнӑ. Вӗсен картинине пӑхсан калама ђҫ: ку сӑнсене çыракан çын крексен хитре кӗлеткисене те тума пӗлет̆, Христус тӗнӗпе тасалнӑ ђуна та етем сӑнӗ çинђе палӑртат̆. Ку сӑнсем çинђе таса шухӑшпа хитре ўт пӗрле хутӑшнӑ. Çавӑнта кун пек картинкӑсем тӗнђере те урӑх çук.

Тата малалла кайӑпӑр: Фламандири искусствӑна аса илер.

Епир калӗх малтан çыннисене илӗпӗр: çыннисем мӗнле—искусствӑ та çавнашкалах. Çӗр-шыв мӗнле—халӑхӗ те çавлашхаллӑ... Фламандире тырӑ-пулӑ курӑк-çарам питӗ авам. Курӑкӗ ӗнесене лайӑх устерет. Вара çынсем сӗтпе, сӑрапа, какайпа (ашпа) мӑнтӑрланса пурӑнаççӗ. Аллирисем пӗççи-каççисем пӗрене пек, хырӑмсем такана пек. Ӗçес, сийес, хӗпӗртес, савӑнса, пурӑнӑç сӗткенне пехлесе вӑхӑт иртерес... Вӗсен искусствӑ мӗнле? Рубенс çырнӑ картинӑсем çинђе Христуссем, апостӑлсем месин пек, Мария Магдалинӑсем самӑрӑлса кайнӑ арӑмсем пек. Вӗри йун, таҫка çемçе ўт пурӑнӑç сӗткенне ӗçсе тӑранассине кӗтсе тӑрат̆. Кун пек искусствӑра етем витђӑх пек самӑрӑлнӑ. Пире ун пек искусствӑ кирлӗ мар.

Кунтан малалла искусствӑ хутӑшса кайнӑ вара. Унталла та кунталла та ђупкаласа пӑхрӗç,~ çук пӗр сӳнме пуçланӑ йапала сӳнсех пырат̆: Текнатентствӑ тийекен май пуçланса кайат̆, анђах пуçланса кайнӑ кайатпӗлӗт те. Çимволистсем, хутурисӑмсем, роккоккосем, темскерсем те сике сике тухаççӗ.

Мусӑк та çавлашкалах. Кӑнтӑрла йенђи халӑхсем вӗри йуклӑ, патрак ђӗреллӗ. Вӗсен мусӑкӗ-хӗвел шӑрӑхӗ, вӗриленсе çитнӗ ывлӑш. Вӗсем мусӑкӗ йурлат̆, кулат̆, çавӑнат̆. Вӗсен сӑвви ђӗкçç пек çӑмӑллӑн вӗçет, çутӑ тинӗс пек йалтӑртатат̆. Çак мусӑк пирӗн ђуна савӑнтарат̆, хуçкалат̆, анђах вӑл пире ађа-пӑђа кулнӑ пек, выљанӑ пек анђах туйӑнат̆.

Малалла хӗвел анӑç йенђи халӑхсем тура халӑхсен мусӑкӗ ђапла тухат̆. Кусен мусӑкӗ тӗксӗмрех. Çӑра йун хуллемрех йухат̆. Етем сийессине те нумай çийет, ӗçессине те нумай ӗçлет. Пурӑнма вӑй нумай кирлӗ. Укçа пирки, пурӑк пирки етем таçта та çитсе перӗнет. Унӑн пурӑнӑçӗ питӗ йывӑр. Вилиђђен темӗн те курат̆, темӗн те илтет, темскер те шухӑшлат̆. Вӗсен ӑллаcа илмелле

---

*) кӗлеткесем.

мар. Пĕр икĕ виççĕ итлес пулаť, вара тин ђуп тапма пуçлаť. Ку мусăк пирĕншĕн авал та, анђах ăна епир ђăс ђасах тăнланаймастпăр. Кунта пурте пур: пуршуй валли хăлхана ăшăшлантаракан сăвăсем те пур, култа хĕпĕртени те пур, кулни те пур, макăрни те, ăрçни те пур, асан курни те пур, çылăхран ӳкĕнни те пур, аскăнни те пур, çилăх тумни те пур,—етем ђунĕ, етем ђĕри мĕн тӳсет—вăл пур те пур. Ку мусăк—вĕреннĕ çынсем валли, вăл хура халăх мусăкĕ мар. Ку мусăка итлесе тăма питĕ асап: Ăшра çилтăвăл тапранса кайаť те лăпланмасăрах йулаť. Çавăн пирки мусăк итленĕ хыççăн çут çанталăк пушă пепех туйăнса кайаť.

Çавăнпа ку мусăк—ревољутси мусăкĕ мар, вăл халăх мусăкĕ мар.

Ревољутси искусстви ревољутси пуçланиђĕнех пулнă. Анђах ун ђухне вăл тĕлĕн-тĕлĕн анђах пулнă. Пурăнăç пуршуй шăршипе виттĕр ђăннă пирки çак искусствă саралса, хăватланса пырайман. Унăнне ђеђекне те тата-тата илнĕ, тымаррине те ђăкланă. Халĕ ревољутси пĕтĕм тĕнђене саралаť. Малалла пурте хавăхлă пулаť, ĕç çыннисен пулаť. Искусствă та халăх тăнламалла пулаť.

Акă сике-сике тухаççĕ çĕнĕ поетсем, çĕнĕ писсаттĕлсем, çĕнĕ хутошниксем, çĕнĕ мусикçăсем. Халиђен мусăкçăр пурăнна халăх хăйĕн мусăкне тума тапратнă. Ђăвашсем мĕн хăтланаççĕ? Ђăваш мусăкне кам çуратрĕ? Ревољутси! Унта та кунта та çпектаккăљ, пĕр йалта концеерт, тепĕр çĕрте мусăк. Пур çĕрте те—хура халăх. Ватти-вĕтти, арçын, хĕр-упраç—пурте курасшăн, итлесшĕн. Çакă ăна пĕлтерет?

Искусствă халăх йеннелле çавăрăнаť, ăна мĕне пĕлтерет.

Пăхар хаљхи картинăсене. Етемсен сăнĕ çирĕп, ђукун пек, пронсă пек. Еçлекен çынсен кăвăрăсем тимĕр пек, шăнăрĕсем ђĕн пек, сăнђăр пек, куçĕсем хурђăка куçĕ пек çивђĕ. Пурте ĕçрен тухнă, пурте ĕçре пиçнĕ, пурне те пуйанлăх пусса пурăннă, пурне те йывăр пулнă. Халĕ вĕсем пурте пĕр шутлă, пĕр ђунлă, пĕр ђĕрелле. Вĕсен шухăшĕ—тĕнђери ревољутси, вĕсен савăнăçĕ—тĕнђери сотсиалисăм.

Мусăк та çавнашкалах. Унăн сăввисем çирĕп пеççĕ. Ăша кĕрсен вĕсем ђуна хавасланттараççĕ, йăваш ђĕрене вăйлантараççĕ. Хаљхи мусăк—çĕнĕ мусăк. Вăл халăх валли пулмалла, ăна пурте тăнламалла.

Сывă пултăр çĕнĕ искусствă!

Сывă пултăр ревољутси!

Ф. Павлов.